Район администрацийĕн кунĕнчен

Канăç паман ыйтусем кунта та пур

Ытти çĕрти пекех пуçланчĕ Турай ял тăрăхĕнче иртнĕ район администрацийĕн кунĕ юн кун: унта хутшăнакансем вырăнти предприятисемпе организацисенче, учрежденисенче, ăнăçсăр çемьесенче пулчĕç, халăха хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнчĕç. Çуткӳлте пурăнакансем ялти клуба пуçтарăннă. Тĕл пулура вĕсем хăйсене канăç паман ыйтусене нумай хускатрĕç.

– Шкул автобусĕ çĕмĕрĕлнипе ачасем шкула çула май каякан машинăсемпе ларса каяççĕ. Палламан çынсемпе ларса кайма та шиклĕ,– терĕç хĕрарăмсем.

Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, Муркаш райпо Канашĕн председателĕ Б.В. Андреев тӳрех ку ыйтупа районти вĕрентӳ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçипе З.Ю. Дипломатовапа çыхăнчĕ: ку ыйтăва çак кунсенчех татса параççĕ.

Çуткӳлте шыв çукки те самаях пăшăрхантарать ял çыннисене.

– Урамра пĕр çутă та çук.

Культура ĕçченĕсем калана тăрăх, электролампочкăсене лартакан çын çуккинче иккен ку сăлтав.

Муркаша каякан автобус ирхине 6 сехет иртсенех пулать.

– Тата кăшт каярахпа тепĕр рейс туса пама май çук-ши?

Ку ыйту пурнăçа кĕме пултармаллине палăртрĕ Борис Васильевич Турайĕнчи Культура çуртĕнче халăхпа иртнĕ тĕл пулура.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.В. Павлов иртнĕ çул туса иртternĕ ĕçсем çинче чарăннă май, проблемăсем çинче те чарăнчĕ. Пĕлтĕр çăлсем тума 50 кăшăл туяннă. Ял çыннисем хăйсемех чаврĕç çăлсене. Çуткӳлте те çитес вăхăтрах çăл чавма палăртрĕç. Кăшăлĕсемпе ял тăрăхĕн администрацийĕ тивĕçтерĕ. Чавтарассине Муркаш райповĕ хăй çине илнине палăртрĕ Б.В. Андреев. Урамсене çутатас ыйту çинче чарăннă май Александр Васильевич ку енĕпе перекетлĕ пулмаллине палăртрĕ.

Пур проблемăсене вара кунта ытти енĕпе те татса пама тăрăшаççĕ. Пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе Суворов яч. хис. хуçалăхпа каласса татăлса, хуçалăхăн пушар машинине тытса тăма ял администрацийĕ укçа куçарса парать. Çакна валли бюджетра 84 пин тенкĕ пăхса хăварнă. Икĕ çынна çурт-йĕрлĕ пулма субсиди парса пулăшнă.

Ялсенчи 4 масара тирпейлесех тăраççĕ. Пĕлтĕр Çуткӳл масарне карта тытса çаврăннă. Анаткасси масарĕ тавра карта тытма пуçланă ĕçе те кăçал вĕçлеме палăртаççĕ. Кăçал çавăн пекех Çĕн Шаптакри масар территорийĕнче те чылай ĕçсем туса иртermелле. Пĕлтĕр, тавралăх илемĕшĕн тăрăшса, культура ĕçченĕсемпе пĕрле 500 йывăç лартса хăварнă ял тăрăхĕн территорийĕнче.

Тавралăха тирпей-илем кĕртес енĕпе ĕçлеççĕ-ха. Анчах та пĕрисем тирпейленине теприсем хыççăнах варалани кӳрентерет. Эрехне ăçта ĕçеççĕ, кĕленчисене çавăнтах пăрахса хăвараççĕ. Эрех-сăрапа иртĕхнин проблеми ку ял тăрăхĕн кун йĕркинчен те каймасть. Çак сăлтава пулах ĕнтĕ вăрçă-харкашу тухать. Иртнĕ çул ял тăрăхĕн территорийĕнче преступлени тăвасси ӳснĕ.

Çапах та ку тăрăхра пултаруллă та маттур çынсем сахал мар. Ял çыннисем пĕрле савăнма, пушă вăхăта пĕрле иртterме пĕлеççĕ. Спорт мероприятийĕсем нумай иртни те çакнах çирĕплетсе парать. Вырăнти депутатсем, культура ĕçченĕсем, шкул коллективĕ, Уйăкасри Столяровсен çемйи уйрăмах активлă иккен ку енĕпе.

Кăçалхи задачăсенчен Александр Васильевич çаксене палăртрĕ: 2 урама электрификацилемелле, 11 ялти çулсене пăхса тытса тăмалла, 4 шыв башнине те ял тăрăхĕн балансĕ çине куçармалла.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.А. Калинин хăйĕн сăмахĕнче ку ял тăрăхĕнче пай çĕрĕсене харпăрлăха куçаракансем 50 çын ытларах пулнине, ку енĕпе тăрăшарах ĕçлемеллине палăртрĕ. Çавăн пекех Владимир Аркадьевич халăха пăшăрхантаракан ыйтупа – аммиак цистернине касса вакла-кансене (вĕсенчи юлашки шĕвек улăхсене шывпа юхса кĕрес, Çуткӳле варалас хăрушлăх пур) тупса палăртса, çитменлĕхе пĕтерессипе конкретлă мерăсем йышăнассине палăртрĕ.

Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. Петрова салтак арăмĕсене пурне те çурт-йĕре юсама пулăшнине, паянхи куна çурт-йĕрпе тивĕçтермелли черетре ку ял тăрăхĕнчен 3 вăрçă ветеранĕ тăнине палăртрĕ.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г Данилов эмелсемпе çыхăннă ыйтусем çине хуравларĕ. Малашне вырăнсенче медицина учрежденийĕсенче эмелсем сутас ыйту татăлмаллине палăртрĕ. Тĕл пулу вĕçĕнче Владимир Аркадьевичпа Владислав Григорьевич ветерансемпе тыл ĕçченĕсене Аслă Çĕнтерӳ 65 çулултарнă май юбилей медалĕсем парса чысларĕç. Турайри культура ĕçченĕсенчен йĕркеленнĕ агитбригада хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтармаллипех савăнтарчĕ.

Л. ПАВЛОВА.

Аслă Çĕнтерӳ кунĕ 65 çул тултарнă май

Герой ячĕпе

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунă Совет Союзĕн Геройĕ Григорий Алексеев ячĕпе иртнĕ шăмат кун Чуманкассинчи вăтам шкулта спорт ăмăртăвне ирттерсе тата ăна пуçарса ярса чăннипех те ырă ĕç турĕç. Шкулта Герой ячĕпе хисепленсе тăракан çарпа патриотла клуб пурри ахаль кăна мар эппин. Кăçал çак ăмăртăва пĕрремĕш хут ирттерсе кубок выляттарчĕç. Ăна çĕнсе илекеннисем вара Шуршăл шкулĕнче ĕçлекенсен команди пулчĕ. Куçса çӳрекен кубокпа çĕнтерӳçĕсем çитес çул каллех Чуманкассинчи вăтам шкула килĕç. Призлă вырăнсем йышăннă «Физмат» тата кил хуçисен командисем вара ăна çĕнсе илес тесе тăрăшма сăмах пачĕç.

В. НИКОЛАЕВА.

Пирĕн пата çыраççĕ

Шетмĕпуçне çуркунне çитрĕ

Март вĕçĕнче Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче Хĕл ăсатăвĕ иртрĕ. Ирхине ирех Тивĕш клубĕ умĕнче илемлĕ кĕвĕ янăрарĕ. Хĕле ăсатма пурĕ 5 ялтан пуçтаранчĕç. Пурне те Раççей Геройĕ Е. Борисов, Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Александров саламларĕç. Вырăнти хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи В. Никитинапа районти депутатсен Пухăвĕн депутачĕ В. Федотова тата ыттисем те салам сăмахĕ каласа савăк кăмăл сунчĕç. Уявра тĕрлĕрен спорт ăмăртăвĕсем те пулчĕç. Кашни ялăн ушкăнĕ хăйĕн пултарулăхне илемлĕ юрă-ташăра та кăтартса пачĕ. Пур енлĕ пĕтĕмлетӳ хыççăн вара Катăкуйсем чи пултаруллисем пулни палăрчĕ.

В. НИКИТИНА, хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.

ОАО «Страховая компания «Чувашия-Мед» сообщает

«МЫ ЗАБОТИМСЯ О ВАШЕМ ЗДОРОВЬЕ»

Это не просто красивая фраза, это — наш общий девиз и кредо каждого сотрудника, - считает **генеральный директор ОАО «Страховая компания «Чувашия-Мед», заслуженный экономист Чувашской Республики Ирина Всеволодовна Клементьева.**.

Самое главное в нашей работе – сделать все, чтобы жители нашей республики, а их застраховано у нас более 1 млн. человек, беспрепятственно, своевременно получали качественную медицинскую помощь в соответствии с государственными гарантиями и стандартами лечения. Поэтому защита прав, отстаивание законных интересов наших застрахованных в получении бесплатной квалифицированной медицинской помощи находятся в центре внимания компании.

Эффективным инструментом в этой работе является контроль качества медицинской помощи. Регулярно проводятся вневедомственные экспертизы качества медицинских услуг. В прошедшем году проведено 231497 экспертиз качества медицинской помощи, в том числе в лечебно-профилактических учреждениях Моргаушского района - 2596. Кроме плановых проверок осуществляются внеплановые целевые экспертизы по заявлениям застрахованных граждан. Особо подчеркну, что специалисты, проводящие экспертизу, имеют высокую профессиональную подготовку и богатый опыт работы. В отделе контроля качества медицинской помощи, возглавляемой врачом высшей категории, кандидатом медицинских наук М.Е.Максимовой, работает 16 специалистов, осуществляющих функции штатных врачей-организаторов и врачей-экспертов. 59 врачей-экспертов работают на внештатной основе. В числе экспертов – 9 докторов и кандидатов медицинских наук, большинство - специалисты, имеющие высшую врачебную категорию. В 2009 г. врачами отдела проведено 38 целевых экспертиз.

Внедрение новых элементов в технологию медицинской экспертизы (клинические обходы, очные экспертизы, разбор клинических случаев, взаимодействие при этом ведомственной и вневедомственной экспертизы) позитивно влияет на ее эффективность. В районных лечебно-профилактических учреждениях в 2009 г. общее число выявленных нарушений уменьшилось по сравнению с 2008 г. с 47% до 41%. В числе наиболее распространенных дефектов, к сожалению, остается оказание помощи ненадлежащего качества — 29,8%.

«Страховая компания «Чувашия-Мед» прочно стоит на позициях информационной открытости. Работает «Горячая линия» **66-22-26**, по которой каждый житель республики может задать волнующие его вопросы, получить необходимые разъяснения и консультации по реализации своих прав в сфере здравоохранения. Мы стараемся не обременять затратами на телефонные переговоры жителей районов. Достаточно, набрав номер «Горячей линии» **66-22-26**, сообщить номер своего телефона. Специалисты компании тут же перезвонят и ответят на поставленные вопросы.

Компания обеспечивает бесперебойное финансирование учреждений здравоохранения за оказанную медицинскую помощь. В 2009 г. на эти цели нашей компанией в ЛПУ Моргаушского района было перечислено 42,5 млн.руб. Кроме того, лечебные учреждения получают от нас средства на повышение квалификации медицинских работников, приобретение медицинской техники, проведение гигиенического воспитания населения и другие цели. Так лечебно-профилактические учреждения Моргаушского района получили дополнительно на перечисленные статьи расходов в общей сложности около 1,8 млн. руб. Самая дорогостоящая статья расходов связана с внедрением новых медицинских технологий и приобретением современной техники. Многие лечебные учреждения в прошлом году были оснащены реанимационными и анестезиологическими мониторами, физиотерапевтическим оборудованием, функциональными кроватями, глюкометрами, электрокардиографами, гинекологическими креслами, стоматологическим оборудованием и др. Лечебно-профилактические учреждения Моргаушского района получили в свое распоряжение гастрофиброскоп, лампу операционную передвижную, дистиллятор, шкаф для хранения эндоскопов, монитор реанимационный и анестезиологический, коагулометр и др. Кроме того, проводилось оснащение оборудованием офисов врачей общей практики. Все это, без сомнения, позволит на порядок улучшить медицинское обслуживание населения Чувашии.

Несмотря на кризисные явления в экономике, ОАО «Страховая компания «Чувашия-Мед» не только устояла, но и усилила свои конкурентные позиции на рынке медицинского страхования. По итогам работы в 2009 г. мы признаны Лучшей медицинской страховой компанией Поволжья, став **победителем конкурса Поволжской национальной премии в области страхования «Серебряный зонт».** Эта награда обязывает нас еще лучше работать во благо здоровья населения республики, в целях обеспечения каждого застрахованного качественной медицинской помощью. Мы уверены, что это нам по плечу.

Юбилей

Саламлатпăр

Юратнă мăшăра, ытарайми хĕрĕме, ырă кăмăллă аннене, йăмăка, аппана, хисеплĕ тăвана – Муркашра пурăнакан **Людмила Викторовна МАСТЕРОВАНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ăшă туйăмпа саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эс пурришĕн эпир чăнах та савăнатпăр, хамăра телейлĕ туятпăр. Юбилей ячĕпе саламласа сана юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул, телей, ăнăçу сунатпăр.Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем çитсех пыччăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе яланах пуян пултăр.

Пысăк салампа: амăшĕ, хăйматлăх амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕсем, тăванĕсем, Котельниковсем, Сорокинсем, Тучевсем, Спиридоновсем, Захаровсем, Лепешкинсем, Родионовсем.

Юратнă та хаклă çыннăмăра, çепĕç чунлă аннене, хунямана, мамака – Ятман ялĕнче пурăнакан **Людмила Леонидовна МАЛЫШЕВАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр.

Эсĕ пурри пирĕншĕн, ачисемшĕн, питĕ пысăк телей. Хамăра çав тери телейлĕ туятпăр, тайма пуç сана пуриншĕн те. Çирĕп сывлăх, телей, канлĕ ватлăх сунатпăр. Хуйхă-суйхă, инкек-синкек санран аякра тăччăр.

Çавăн пекех кинĕн те, **Наталия МАЛЫШЕВАН**, çуралнă кунĕ, ăна та çирĕп сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

Саламлаканĕсем: икĕ ывăлĕпе кинĕсем, хĕрĕ, 3 мăнукĕ, хăтитăхлачисем тата çывăх тăванĕсем.



Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра – **Владимир Ефимович КИРШЕВА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн мĕн пур ăшă туйăмпа саламлатпăр. Тулли пурнăçпа савăнса пурăнмалла пултăр. Хуйхă-суйхă, инкек санран аякра тăччăр. Пурнăç сукмакĕ яланах такăр та çутă пултăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçланса пытăр.

Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, ывăлĕсем-пе кинĕсем, мăнукĕсем.



Юнкă ялĕнче пурăнакан пирĕн хаклă çыннăмăра – **Валерий Трофимович РОМАНОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.

Çулсем иртеççĕ сисĕнми,
Кирлех-ши уншăн кулянма?
Вăй-халăр пултăр иксĕлми,
Нумай çул сунатпăр пурăнма.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.

Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Мария Варсанофьевна ВЬЮШКИНА** паян 70 çул тултарчĕ. Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Вăл тивĕçлĕ канăва тухиччен «Свобода» хуçалăхра тĕп зоотехник пулса ĕçленĕ. Ĕçри ӳсĕмсемшĕн ăна ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ят панă. Вăл тунă ĕçсем паянхи кун та халăх асĕнче. Эсĕ пирĕншĕн яланах ырă тĕслĕх пулса тăратăн. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр, хамăра телейлĕ туятпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Турри патăр сана çирĕп сывлăхпа вăрăм кун-çул тата пурнăçра килĕшӳ.

Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.



Хаклăран та хаклă мăшăрăма, ытарайми аннене, кукамая, асаннене – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Валентина Александровна ПЕТРОВАНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн питĕ пысăк телей. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей пултăр. Тавах сана пуриншĕн те.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрĕвĕсем, мăнукĕсем.

Юратнă мăшăра, ăшă кăмăллă аннене, хисеплĕ тăвана – Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Галина Алексеевна ГАВРИЛОВАНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Санăн ырă кăмăлу, чун ăшши пире кунсерен вăй-хăват парса, çунат хушса тăраççĕ. Эс пурри пирĕншĕн – иксĕлми телей.

Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм килтĕр, телейпе ăнăçу яланах юнашар çӳреччĕр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, çемйӳнте татулăхпа килĕшӳ пултăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕсем, çывăх тăванĕсем.



Юратнă аннене, мамака, кукама, хисеплĕ тăвана – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Лидия Алексеевна АФАНАСЬЕВАНА** 82 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Анне, сана юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр, пире пурнăç çулĕ çине тăратнăшăн çĕре çити пуç таятпăр, нумай çул пире савăнтарса пурăнмалла пултăр.

Пысăк салампа: хĕрĕсемпе ывăлĕсем, 8 мăнукĕ, 2 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, хунямана, асаннене, кукамая, ватă кукамая – Çĕньял Муркаш ялĕнче пурăнакан – **Дарья Петровна ДАНИЛОВАНА** 85 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр, татах нумай çул пире савăнтарса пурăнма ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр, хамăра телейлĕ туятпăр. Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх, телей сунатпăр. Тулли пурнăçпа савăнса пурăнмалла пултăр, хуйхă-суйхă, инкек санран аякра тăччăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

Саламлаканĕсем: хĕрĕсем, кĕрĕвĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, хăтисемпе тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.

Çатракассинче пурăнакан **Вера Петровна КОНУЗИНАНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Пурнăçу ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр. Ĕçре ăнăçу, килте яланах килĕшӳ, çирĕп сывлăх сунатпăр.

Сире хисеплесе саламлаканĕсем – пĕрле ĕçлекенсем.